www.tavanen.ru

Тăван Ен

плюс Причебоксарье

№ 29 (10575-10576) ИЮЛĔН 28-МĔШĔ 2017 ЭРНЕКУНСЕРЕН ТУХАТЬ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать



«Сахал мар пуçлăхпа ĕçлерĕм...»

Редакци: ĕнер тата паян
«ТĂВАН ЕНЕ» - 85 ÇУЛ → 4

Мотоблок – авари сăлтавĕ
АСĂРХАНĂР! → 6

Шăпчăксем те кăнтăрла юрлаççĕ
ПАТРИОТ → 10

В. Шумилова сăн ӳкерчĕкĕ

Вырма каярах пуçланĕ

анчах та техника хатĕр пултăр

• ТĔРĔСЛЕВ

Кĕрхи тырăсене вырса пуçтармалли вăхăт çывхарса пырать. Çав тĕллевпех паянхи кун ял хуçалăх предприятийĕсемпе ХФХсем комбайнсене хатĕрлеççĕ. Вырма ĕçĕсене ăнăçлă ирттересси çанталăкран та, ĕççие епле хатĕрленнинчен те нумай килет-çке. Уй-хир карапĕсене вăхăтра юсаса çитменлĕхсене пĕтерни пĕлтерĕшлĕ. Комбайнерсемпе вĕсен пулăшуçисем çителĕклĕ-и – çакă та хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче ура хума пултарать.

Штурвал умĕнче – опытлисем

Районти техника надзорĕн инспекцийĕнче пурĕ 47 комбайн шутланса тăрать. Вĕсенчен 40–шĕ – ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен-фермер хуçалăхĕсенче, 7 комбайн вара уйрăм çынсен аллинче. Тĕрĕслев вăхăтĕнче техника юсавлăхне кăна мар, пушар хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă пирвайхи япаласем пуррине те пăхаççĕ. Унсăр пуçне комбайнерсен тракторист-машинистăн F категориллĕ удостоверенийĕ те пулмалла.

Эрне пуçламăшĕнче тĕрĕслев «Атлашевский» СХК-ра тата çавăн ятлă агрофирмăра иртнĕ. Комбайнерсем уй-хир карапĕсене тăрăшсах хатĕрленĕ, 5 комбайн паян тесен паян вырмана тухма хатĕр. «Чурачикское» ОАО ĕççенĕсем 4 комбайна тĕрĕслеве тăратнă. «CIass» комбайн штурвалне иртнĕ çулхи пекех Андрей Морозов тытса пырĕ. «Донсем» çинче кăçал çĕнĕ комбайнерсем – Геннадий Черновпа Геннадий Петровский вăй хурĕç. «Палессе» комбайн штурвалне темиçе çул Алексей Юнусов алăран вĕçертмест, хальлĕхе техника «Прогресс» ЗАО-ра тĕрĕслеве хатĕрленет. Пĕлтĕртенпе асăннă хуçалăхра вăй хуракан, пысăк опытлă комбайнер Михаил Эткеров кăçал уй-хире çĕнĕ, кӳршĕ районтан хăваласа килнĕ «АГРОС-580» комбайнпа тухма хатĕрленет. Кадрсен ыйтăвĕн çивĕчлĕхĕ асăннă хуçалăха пырса тивмест – хальлĕхе кунта специалистсем çителĕклĕ. «Юсав ĕçĕсене вăхăтра вĕçлес тесе комбайнерсем ĕç кунĕ вĕçленсен те юлса ĕçлерĕç. Йӳççине кăмăллакансем çук, ун пеккисене тытмастпăр», – ĕнентерет тĕп инженер Игорь Мясников. Хуçалăхра 3 комбайн тĕрĕслев витĕр ăнăçлă тухрĕç.

Çамрăксем юлхавланмаççĕ

«Приволжское» АО-ра тĕрĕслеве тĕплĕн хатĕрленнĕ. Ретпе лартса тухнă комбайнсем патĕнче юлашки гайкăна пăрса лартас тесе тăрăшакансем куç умне пулмарĕç. Сергей Титов, Сергей Эткеров тата Михаил Калишов вырмана тухма хатĕр, вĕсен кирлĕ удостоверенисем пур, техника та тĕрĕстĕкел. Кашнин патне пулăшуçăсене çирĕплетнĕ.

Сергей Эткеров 14 çултан тытăнса ашшĕпе пĕрле комбайн çинче вăй хунă, пулăшса тăнă. Ашшĕ хăй мĕн пĕлнине пĕтĕмпех ăна вĕрентсе хăварнă. Ытти чухне яш тракторпа ĕçлет.

Калишовсен ĕçчен çемйи пирки ырă сăмахпа каламасăр май пур-и вара? 6 ывăл ӳстерекен çемьере аслисем вĕçсе тухнă, çемьеллĕ. Ачисене мĕн пĕчĕкрен ĕçе явăçтарса ӳстернĕ вĕсем, ывăлĕсем те хăй вăхăтĕнче пурте тенĕ пекех пĕрин хыççăн тепри комбайнер пулăшуçинче вăй хунă. Хальлĕхе черет – 17 çулти Стас патне çитнĕ. Вăл 3 çул ытла кашни çулла комбайнер пулăшуçинче тимлет. Ашшĕне юсав ĕçĕсем ирттерме пулăшать, пĕртте ӳпкелешмест.

Стас ашшĕ патне гаража миçе çулта чупма тытăннине ас тумасть те.

→ 2

● ПИРЕ САЛАМЛАÇÇĔ

Юлия СТРОЙКОВА,
ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ

Хисеплĕ ĕçтешсем, «Тăван Ен» хаçат редакцийĕн коллективĕ!

Паян сирĕн редакцире туслă, хăйсен умĕнхи ăрăвĕн йăли-йĕркине пĕтĕм яваплăх туйăмĕпе упракан команда тăрăшать. Кăмăллă тата лăпкă лару-тăру, тивĕçсене тĕп-тĕрĕс валеçни муниципалитетпа юратнă Чăваш Енĕн тĕрлĕ енлĕ пурнăçĕ пирки тулăх информаци уйĕ тума пулăшаççĕ. Сирĕн тĕрев – штатра тăман корреспондентсем, чылайăшĕ республикăра палăрнă журналистсем.

Хаçатăн 80 çулхи юбилейĕ тĕлне Интернет уçлăхĕнче редакцин çĕнĕ сайчĕ ĕçлесе кайрĕ, кăçал вара, 85 çулхи юбилее вăл Роскомнадзор панă официаллă массăллă информаци хатĕрĕн статусĕпе кĕтсе илет. Юбилее хатĕрленсе редакци Пичет музейне те йĕркелерĕ.

ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви Сире чунтан-чĕререн юбилей ячĕпе саламласа çитĕнӳсемпе лăпланмасăр ура çинче çирĕп тăма, малалла та малалла аталанма, чечекленме тапса тăракан вăй-хал, хавхалану сунать, ĕмĕтленнĕ ырă шухăшăрсем пурнăçа кĕрсех пычăр!

→ 4

● РЕСПУБЛИКĂРА

Июлĕн 26-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе Министрсен Кабинечĕн черетлĕ ларăвĕ иртнĕ. Унта обществăлла транспорт тата унăн тӳлевĕпе çыхăннă ыйтусене пăхса тухнă. Михаил Игнатьев халăха йышлăн илсе çӳрекен транспортсен хăш-пĕр хуçи федераци тата регион шайĕсенче йышăннă мĕнпур саккуна туллин пăхăнманнине палăртнă. Тĕслĕх вырăнне Шупашкарта çӳрекен маршут таксийĕсене илсе кăтартнă. «Хула йышăну туса хăварнă, халăха илсе çӳрекенсем паян кун та терминалсемсĕрех», – çирĕппĕн каланă вăл Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхне Алексей Ладыкова.

Михаил Игнатьев çак ыйтура ĕçлекен яваплă министерствăна çирĕп асăрхаттарнă, йĕрке тума хушнă.

«Тăван Енсĕр» тăвансăр

Михаил ВАСИЛЬЕВ,
Шăнкас

МИХАИЛ ИГНАТЬЕВ,
ЧР Пуçлăхĕ:

– Пассажирсене турттарасси – тупăшлă услам. Анчах та конкуренциллĕ хутлăхра пурин те пĕр условисемпе ĕçлемелле. Паян потребитель валли нимĕнле чăрмав та пулмалла мар. Пассажирсем электрон хатĕрсемпе те тӳлеме пултарччăр, транспорт организацийĕсем вара вĕсене сăмахсăрах йышăнма тивĕç.

ЫТЛАРИКУН ЧĂВАШ ЕН ПУÇЛĂХĔ МИХАИЛ ИГНАТЬЕВ РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ПАТШАЛĂХ ДУМИН ДЕПУТАЧĔСЕМПЕ ПĔТĔМ РАÇÇЕЙРИ «ПĔРЛĔХЛĔ РАÇÇЕЙ» политика партийĕн членĕсемпе Алена Аршиновăпа, Николай Маловпа тата Леонид Черкесовпа ĕçлĕ тĕл пулу ирттернĕ, чи çивĕч ыйтусене сӳтсе явнă. Депутатсем республика РФ шайĕнче авторитетлă пулнине тата ăна ыттисем хисепленине пĕлтернĕ.

Леонид Черкесов Чăваш Республики шкулсене хăпартма федераци уйăракан укçа-тенкĕне вăхăтра тата тухăçлă усă курса пынине пĕлтернĕ. Кунсăр пуçне регионти хытă каяшсене пуçтарса тирпейлессипе ытти субъектшăн тĕслĕх вырăнĕнче пулса тănине каланă. Ку хутĕнче ертӳçĕсем РФ вĕренӳ тата наука министрĕ Ольга Васильева пуçарăвне сӳтсе явнă, муниципалитетсем çинче шутланса тăракан шкулсене регионсен шайне кăларма тăратнă ыйтăва пăхса тухнă. ■

Çул çинче

ВИÇĔМКУН М7 ТРАССĂН ÇĔРПӲ РАЙОНĔНЧИ ПАЙĔ ÇИНЧЕ 13 СЕХЕТ ТЕ 30 МИНУТРА ПЫСĂК ТИЕВЛĔ МАШИНĂПА МИКРОАВТОБУС ÇАПĂННĂ. Унта 9 çын шар курнă. Паянхи куна 3 çын вилни тата 6 çынна республикăри медицина учрежденийĕсене сурансемпе илсе çитерни паллă. 5 çын сывлăхне вăтам тесе хаклаççĕ, 1 çын реанимацире йывăр выртать. Санавиаци линийĕпе Чăваш Ен сывлăх сыхлав министерствин штатра тăман тĕп хирургĕ Ильдар Абызов аварире суранланнă хĕрарăма хирург пулăшăвне кӳрес тата консультаци парас тĕллевпе Шупашкар район больницинче пулнă. Çул-йĕр инкекĕнче суранланнисене медицина пулăшăвĕ кӳме медицина учрежденийĕсенче эмелсем тата юн компоненчĕсем çителĕклех. ■

ПИРЕ САЛАМЛАÇÇĔ

Андрей НИКОЛАЕВ,
Шупашкар район пуçлăхĕ

Зоя МАСЛОВА,
райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ

«Тăван Ен» хаçат редакцийĕн хисеплĕ ĕçченĕсем!

Пĕлтерĕшлĕ кунпа – хаçатăн 85 çулхи юбилейĕпе – чунтан-чĕререн саламланине йышăнса илсемĕр!

85 çул – ку вăхăтри массăллă информаци хатĕрĕсемшĕн чăннипех те çирĕп тĕрĕслев вăхăчĕ. Çак вăхăт тăршшĕпех хаçат Шупашкар районĕн тĕп тата чи хисеплĕ пичет кăларăмĕ пулнă. Муниципалитетра иртекен пур мероприяти пирки те информацие халăх патне туллин çитерет, учрежденисемпе тата предприятисемпе тачă çыхăну тытать паян «Тăван Ен».

Ку вăхăтри информаци хутлăхĕ çĕнĕ технологисене те алла илме, васкавлăн тата мобильлĕ ĕçлеме хистет. «Тăван Ен» вăхăт ыйтнине туллин тивĕçтерсе паян хăйĕн ĕçĕ-хĕлне интернет уçлăхĕнче те, социаллă сетьсенче те сарса пырать. Паян хыпарсен хутлăхне Сирĕн хаçатăрсăр куç умне кăларма та май çук. Теçеткешер çул редакци хăйĕн вулаканне тупма кăсăклантармалли çĕнĕ мелсем, темăсем шырать, анчах та объективлăх, кăмăл-сипет, тĕрĕслĕх принципĕсем уншăн яланах чи малти вырăнта.

Пултарулăха аталантарма, ӳсĕмсем тăвас хавхаланăва, нумай-нумай çул пухнă паха опытпа стиле сыхласа хăварма, вулакан йышне пысăклатма малашнехи ӳсĕмсем валли редакци коллективне чунтан-чĕререн ăнăçу сунатпăр! ➥ 4

® 07-66

«Инкекре пăрахмăпăр...»

• ÇИВĔЧ ЫЙТУ

Канаш хулинчи Ленин ячĕллĕ урамри 4 хутлă çуртра пурăнакансен хваттерĕсене пăрахса хăварма лекнĕ. Сăлтавĕ – çурт стенисем çурăлма тытăнни.

Çынсене эвакуациленĕ

Нумай хваттерлĕ çуртра пăрăхран шыв юхса тăни паллă, çĕр нӳрелнипе урай тĕревĕсем аннă. Чи аялти хутри пĕрремĕш хваттерте стена 4 сантиметр сарлакăш çурăлнă, тепĕр хваттер хуçи Евгений Никитин вара вĕсем малтанах çурăлма пуçланине ĕнентерет. «Штукатурка ӳкетчĕ, обойсем çурăлатчĕç, анчах та кун пек пысăк çурăксем пулманччĕ. Юлашки çулсенче çурăлакан вырăнсене цемент хутăшĕпе нумайрах та нумайрах сĕрме тиветчĕ. Хальхинче хам килте пулман, çурăк пысăкланнине хваттере пăхма килнĕ анне асăрханă. Эпир кӳршĕсемпе тӳрех пĕрлехи диспетчер службине шăнкăравларăмăр», – каласа кăтартнă вăл журналистсене пулни-иртни çинчен. Пĕр подъездра пурăнакан 21 çынна эвакуацилеме тивнĕ, вĕсенчен 14-шĕ тăванĕсем патĕнче хӳтлĕх тупнă, тепĕр 7 çынна, çав шутра 4 ачана, хăна çуртне вырнаçтарнă.

Çакăн пек лару-тăру мĕнле майпа сиксе тухнă тата эвакуациленĕ çынсем хăйсен пурнăçĕшĕн хăрамасăр хваттерĕсене таврăнма пултарĕç-и – çак ыйтусене Правительство çуртĕнче те сӳтсе явнă.

Пур хваттере те лекеймен

Ку çуртра нумай пулмасть капиталлă юсав ĕçĕсем иртнĕ иккен, пăрăхсене те улмаштарнă. Анчах подрядчиксене пур хваттере те кĕртмен – шăпах çав хваттерсен пĕрин айĕнче пăрăх сиенленнĕ те. «Çак çуртри 48 хваттертен 11-не подрядчиксем лекеймен», – пĕлтернĕ Чăваш Енри капиталлă юсав фончĕн директорĕ Олимпиада Епифанова. Канаш район администраци, управляющи компани представителĕсене çакă ĕçсене йышăннине çирĕплетекен акта алă пусма кансĕрлемен тейĕн.

2016 çулта Шупашкарти Грасис урамĕнчи пĕр çуртра та капиталлă юсав ĕçĕсем ирттерме палăртнă пулнă. Çанталăк çумăрлă тăнине пула çурт пуçне хунă облицовка кирпĕч йăтăнса аннă. Канашри тата Шупашкарти авариллĕ çуртсенче пурăнакансем хăйсен пурнăçĕшĕн шикленмесĕр килĕсене таврăнма пултарĕç-и – экспертсем кăна çитес вăхăтра пĕтĕмлетĕç. Вĕсем çуртăн конструкци элеменчĕсене кăна мар, çурт вырнаçнă тăпра тытăмне те тĕпчĕç.

Асăннă лару-тăрăва тĕрĕслесе тăрассине Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăйĕн çине илнĕ. Вăл экспертиза ĕçĕсене хăвăртлатмаллине палăртнă. Чăваш Ен строительство министрĕ Владимир Михайлов та лару-тăрупа вырăна тухса паллашнă. «Кăтартусене пăхса пĕтĕмлетӳ тăвăпăр. Хваттер хуçисене инкекре пăрахмăпăр...» – шантарнă вăл. Çурт шăпине ăна тĕплĕн тишкернĕ хыççăн татса парĕç.

Шухăш

Эпир пысăк опытлă строителе çак лару-тăрăва хаклама ыйтрăмăр. Çурт стени çуркаланма тытăннин сăлтавне мĕнре курать вăл? «Кирпĕч çурт 150 çул лармалла, панельсенчен туни – 120 çул. Çурт проекчĕсене хатĕрленĕ чухне çурт çумĕнче транспорт çӳренине, сывлăш тата тăпра температури улшăнса тăнине, çумăр çунине, шăрăх çанталăка, çил вĕрнине, вибрацисен виçине – пĕр енчен пĕлтерĕшлех те мар факторсене шута илеççĕ. Çурт стенисем çинчи хăйсем тĕллĕн пулакан пысăках мар çурăксем хăрушă мар, çапах та кивĕ çуртсенче пурăнакансене асăрханулăх тата тимлĕх кансĕрлемĕ. Стена çуркаланнине асăрхасанах гипс хутăшĕпе çирĕплетмелле. Енчен те вăхăт иртнĕçемĕн çурăксем сарăлсах пырсан тивĕçлĕ органсенчен пулăшу ыйтмах тивĕ, хăрушлăха тĕрĕс палăртса вĕсем кăна сирме пултараççĕ», – çапларах ăнлантарчĕç пирĕн экспертсем.

■ ДЕОМИД ВАСИЛЬЕВ

Хĕле никам та пăрахăçламан

• КОММУНАЛЛĂ ТЫТĂМ

Урапана хĕлле, çунана çулла хатĕрле тесе ахальтен каламан ваттисем, хутса ăшăтмалли тапхăра та çу кунĕсенчех хатĕрлеме тытăнни пĕлтерĕшлĕ. Шăпах çак ыйтăва сӳтсе яврĕç те райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Зоя Маслова ертсе пынипе эрне пуçламăшĕнче иртнĕ планеркăна.

Унта пай ертӳçисем, ял тăрăх пуçлăхĕсем, управляющи компанисен представителĕсем хутшăнчĕç. Райадминистрацин коммуналлă хуçалăх пайĕн ертӳçи Геннадий Ефимов районти лару-тăрупа паллаштарчĕ. Район территорийĕнчи нумай хутлă 297 çуртран 182-че хутса тăмалли тытăма централизациленĕ. 91 çурта «Жилкомцентр» ООО, 51 çурта «Теплоэнергосети» ООО, 7 çурта – «Дружба» СПОК, 6 çурта – «Новое село» ООО, 14 çурта «Ишлейское» ЖХК МУП, 13 çурта ТСЖ пăхса тăраççĕ. Паянхи кун управляющи компанисем ăшă пăрăхĕсене çуса тасатассипе тимлеççĕ – июлĕн 19-мĕшĕ тĕлне çак ĕçсене 132 çуртра пурнăçланă, ку вăл – 72,5%. Нумай хваттерлĕ 18 çурт тăрринче юсав ĕçĕсем ирттернине палăртмалла. Çуртсенчи шыв, канализаци тата электричествăпа тивĕçтерекен тытăмсене юсасси те пурнăçламалли ĕçсен шутĕнче.

Халăхăн управляющи компанисен умĕнчи парăмĕ паянхи кун тĕлне 24,2 млн тенкĕпе танлашать. Пĕлтĕр çак тапхăрта – 22,7 млн тенкĕ пулнă. Управляющи компанисем парăмсене шыраса илес тĕллевпе суда тавăçсем тăратаççĕ.

Вĕренӳ учрежденийĕсем хутса ăшăтмалли тапхăра мĕнле хатĕрленни çинчен райадминистрацин вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ Борис Романов каласа пачĕ. Райадминистрацин культура пайĕн пуçлăхĕ Маргарита Павлова библиотекăсенче, клубсенче çак ĕç планпа килĕшӳллĕн пынине пĕлтерчĕ. Ишлей салинче блоклă-модульлĕ 2 котельнăй туса пĕтернĕ – çакă кунта пурăнакансемшĕн ырă хыпар. Çĕнĕскерсене «ИЗВА» ООО территорийĕнчи юрăхсăра тухса пыракан котельнăй вырăнне усă курма палăртаççĕ.

«Жилкомцентр» ООО управляющи компани информацийĕпе, паянхи куна 132 çуртри пăрăхсене çуса тасатнă, 73 ăшă узелне юсанă. 18 çуртра хваттер хуçисем ыйтнипе панельсен хушшинчи йĕрсене герметизациленĕ. Паянхи кун электроснабжени тытăмне юсас, алăксене, чӳречесене ăшă тытмалла тăвас, ăшă счетчикĕсене тĕрĕслес ĕçсем пыраççĕ.

■ АННА ФИЛИППОВА

СĂМАХ МАЙ

2016-2017 çулсенчи хутса ăшăтмалли тапхăрта Шупашкар районĕнчи çуртсене 20 котельнăй тата 3 топочнăй урлă ăшă пырса тăнă.

КОММЕНТАРИ

Николай ЕЛАГИН,
«Теплоэнергосети» ООО ертӳçи:

– Эпир 51 çурта пăхса тăратпăр, паянхи куна ăшă пăрăхĕсене çуса тасатас ĕçе пур çуртра та вĕçлерĕмĕр. Çурт тăррисене «çемçе кровля» меслетпе витетпĕр. 2016 çулта хутса ăшăтмалли тапхăрччен 300 тв.м витнĕччĕ, кăçал çак виçене халех пурнăçларăмăр, тепĕр 100 тăваткал метр витес тĕллевлĕ. Халăхăн управляющи компани умĕнчи парăмĕн виçи – 10 млн тенкĕ, ытларах Тутаркасси тăрăхĕнче пурăнакансен. Çынсене парăма хутса ăшăтмалли тапхăр пуçланиччен татма чĕнсе калас килет, мĕншĕн тесен хĕле никам та пăрахăçламан, управляющи компани те хутса ăшăтмалли тапхăра планпа килĕшӳллĕн хатĕрленет.

Квитанцие кĕтсе

Çак кунсенчех район çыннисен почта ешчĕкĕсене коммуналлă пулăшушăн çĕнĕлле шутланă квитанцисене илсе çитерĕç. Июлĕн 1-мĕшĕнчен шывпа, кăвак çулăмпа тата ытти пулăшупа урăх тарифпа усă курма тытăнни пирки пире шăпах вĕсем аса илтерĕç те.

Миçе компани – çавăн чухлĕ хак

Коммуналлă пулăшу тăкакĕсен пысăк пайĕ ăшă тӳлевĕнчен тăрать. Июлĕн 1-мĕшĕнчен вăл пур регионта та пысăкланĕ. Чи пысăк хаксене ахаль те «хаклă» Пушкăртстанра (ӳсĕм 5,3%), Удмурт Республикинче (5,2%) тата хальччен йӳнĕлĕхĕпе тăваттăмĕш вырăнта пулнă Чăваш Енре (5,2%) кĕтеççĕ. Çав вăхăтрах ăшăпа тивĕçтернĕшĕн тӳлев кашни поставщикрен килнине те ăнланмалла: Кӳкеçре, сăмахран, ăшша виçекен гигакалоришĕн çак çур çул пуçланиччен 1533,50 тенкĕ тӳленĕ. Малашне вара – 1580,60 тенкĕ. Ку вăл – Шупашкар районĕнче ăшăшăн çирĕплетнĕ тарифăн чи пысăк хакĕ.

ЦИФРӐСЕМПЕ ФАКТСЕМ

Атайкасси ял тӑрӑх администрацийӗ Явӑшра культурӑпа кану центрне хӑпартма аукцион ҫинчен пӗлтернӗ. Контрактӑн пуҫламӑш хакӗ

3 725 000 тенкӗпе

танлашать. Заявкӑсене августӑн 9-мӗшӗччен йышӑнаҫҫӗ. Ҫӗнӗ клуба 80 ҫын вырнаҫмалла.

ПЕНСИ УКҪИН ИНДЕКСАЦИЙӖ КӐҪАЛ ИКӖ ХУТ ПУЛСА ИРТРӖ ТЕ ӖНТӖ: февраль тата апрель уйӑхӗсенче. РФ Пенси фончӗ ӗҫлекен пенсионерсен пенсийӗ те 2017 ҫулхи августӑн 1-мӗшӗнчен ӳсме пултарасси пирки пӗлтерет. Ӑна пӗлтӗр те ӳстермен-ҫке-ха, кӑҫалхи икӗ индексаци те ӑна пырса тивмен. Тӳлеве ӳстерме Пенси фондне пырса ҫӳреме тивмӗ. Улшӑну хыҫҫӑн ӗҫлекен пенсионерсем укҫана 235,74 тенкӗ ытларах илсе тӑма тытӑнӗҫ. Индексацин чи пысӑк виҫи ҫапларах.

РАЙОНТИ ТӖП БОЛЬНИЦӐРИ АЧА-ПӐЧА УЙРӐМӖНЧЕ ИЮЛӖН 24-МӖШӖНЧЕН ЮСАВ ӖҪӖСЕМ ИРТЕҪҪӖ. Медицина пулӑшӑвӗ кирлӗ пӗчӗк пациентсене районти 2-мӗш больницӑн ача-пӑча тата инфекци уйрӑмне Ишлее ӑсатаҫҫӗ. Район больницин аслӑ фельдшерӗ Алевтина Окликова ӑнлантарнӑ тӑрӑх, юсав ӗҫӗсене августӑн 7-мӗшӗччен вӗҫлеме планланӑ.

РАЙОН БОЛЬНИЦИНЧЕ 2016 ҪУЛТА ИРТТЕРНӖ ДИСПАНСЕРИЗАЦИ ВӐХӐТӖНЧЕ 660 ЧИР-ЧӖР ТУПСА ПАЛӐРТНӐ. 6 ҫынӑнне шыҫӑсем тупнӑ, вӗсенчен 5-шӗ – рак. 2015-2016 ҫулсенче районта ирттернӗ диспансеризаци ҫынсенчен чылайӑшӗн чӗререн тӗрлӗ органсем патне юн ҫӳретекен тымарсен пусӑмӗ, юнра глюкоза виҫи ӳснине, пирус туртни, алкогольпе иртӗхнин сиенӗсене, рационпа килӗшӳллӗн апатланманнине, сахал хусканусем тунине палӑртнӑ. Иртнӗ ҫулта диспансеризацие районта 8693 ҫын тухнӑ.

ПИРЕ САЛАМЛАҪҪӖ

Надежда ДЕМИДОВА,
Федерацин налук службин Чӑваш Республикинчи районсен хушшинчи 5-мӗш инспекцийӗн пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлаканӗ

«Тӑван Ен» хаҫат редакци коллективне 85 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн саламлатпӑр!

Хаҫат паян Чӑваш Республикин тата Шупашкар район аталанӑвӗн чи пӗлтерӗшлӗ пулӑмӗсене ҫутатса тӑрать. 1932 ҫулта «Тӑван Ен» хаҫат хӑйӗн пултарулӑх ҫулне пуҫланӑранпах республикӑра пурӑнакан темиҫе ӑрӑвӑн шанчӑклӑ пулӑшуҫи пулса тӑчӗ. Тӗпрен илсен ҫакӑ редакцире хӑйсен ӗҫне юратакан тата ҫынсене кӑсӑклантаракан ыйтусене татса памашкӑн пулӑшма яланах хатӗр пысӑк професси шайӗллӗ журналистсем чӑмӑртаннипе пулса пырать.

Инспекци тата хаҫат чылай ҫул пӗрпӗринпе тухӑҫлӑ ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Ҫак туслӑх малашне те ҫирӗпленсе пырасса иккӗленместпӗр. «Тӑван Ен» хаҫата пӗтӗм чун-чӗререн пысӑк тираж, вулакан шанӑҫне, унта ӗҫлекенсене пултарулӑх планӗсене, шухӑшӗсене пурнӑҫа кӗртме ырлӑх-сывлӑх сунатпӑр.



Тӑван Ен хаҫат редакцийӗн хастар коллективне, ялкорсене, типографире ӗҫлекенсене чаплӑ юбилей ячӗпе хӗрӳллӗн саламлатӑп, малашне те пысӑк ҫитӗнӳсем тума ырлӑх-сывлӑх сунатӑп. Хӗрӗхмӗш ҫулсенче Шупашкар Районӗнчи «Ленин ҫулӗпе» хаҫат редакцийӗнче ӗҫленӗ **Анатолий Семенович СЕМЕНОВРАН** – Журналистсен союзӗн членӗнчен хӗрӳллӗ салам!

➥ 4

Сентябрӗн 1-мӗшне хатӗр-и?

• ВӖРЕНТӲ

Июль уйӑхӗ. 11-мӗш класс ачисем экзаменсем тытса шкул пурнӑҫӗпе яланлӑхах сыв пуллашрӗҫ, каникул вӑхӑтӗнче ытти вӗренекен канать. Пушанса юлнӑ шкул коридорӗсенче директорсемпе вӗрентекенсем кӑна. Вӗсемшӗн вара хӗрӳ тапхӑр, хӑйне евӗрлӗ экзамен – пуҫланать кӑна-ха.

Июлӗн 18-28-мӗшӗсенче районти шкулсем тата ача сачӗсем 2017-2018 вӗренӳ ҫулне мӗнле хатӗрленнине ятарлӑ комисси тӗрӗслерӗ. Комисси ӗҫне райадминистрацин вӗренӳ управленийӗн пуҫлӑхӗ Борис Романов йӗркелесе пычӗ. Пурне те тӗплӗн тӗрӗслекен комисси, унта 10 ҫын кӗрет – Роспотребнадзор, МЧС, полици, райадминистрацин вӗренӳ управленийӗн тата ятарлӑ программӑсен уйрӑмӗн специалисчӗсем – кашни пункт тӗлне паллӑсем лартрӗҫ.

Кашни вӗренӳ учрежденийӗ хӑйӗн ҫуртне хӑтлӑ, ҫав вӑхӑтрах пӗтӗм правилӑна пӑхӑнса тума тӑрӑшать. Шкулсене пушар, ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑхӗ, терроризма хирӗҫ кӗрешес тӗлӗшӗнчен тӗплӗн тӗрӗслеҫҫӗ, пӳлӗмсем тата сӗтел-пукан мӗнле пулнине те пӑхаҫҫӗ, ачана суранлатмалла мар вӗсен. Вӗренӳ хатӗрӗсен, апат пӗҫермелли блоксен ҫителӗклӗхӗ тата хӑрушсӑрлӑхӗ те тӗпре. Вӗренӳ заведенийӗсенчи ӗҫ хуралне тата ӗҫ вырӑнӗсен аттестацине уйрӑммӑн тӗрӗслеҫҫӗ.

Июлӗн 25-мӗшӗнче комисси Кӳкеҫри лицея тата «Колосок», «Ягодка», «Крепыш», «Пӳрнеске» ача сачӗсене ҫитрӗ. «Колосок» ача садне ҫак кунсенче 45 ача ҫӳрет, вӗренӳ ҫулӗнче – 165. Садике кӗнӗ чухнех комисси членӗсем информаци стенчӗ ҫинчи кивӗ хыпарсене улӑштарма, эрешмен каррисене тасатма сӗнчӗҫ. Райадминистрацин ятарлӑ программӑсен пайӗн тӗп специалист-эксперчӗ Сергей Сармосов садике кӗнӗ вырӑна камера лартмаллине палӑртрӗ. Ҫакӑ кунта кӗрекен кашни транспорта сӑнама май парӗ. Халӗ садикре 4 камера ӗҫлет, каҫпа тавраллах ҫутӑ ҫунать. РФ МЧСӗн Шупашкар районӗнчи профилактикӑпа надзор ӗҫӗсен пуҫлӑхӗ Денис Портнов сигнализаци юсавлӑхне тӗрӗслерӗ, сигнал пушар чаҫне ҫийӗнчех ҫитрӗ.

Кӳкеҫ лицейне ҫуркунне гаражра пушар сигнализацийӗ ҫукки пирки асӑрхаттарнӑ пулнӑ. Паянхи кун ҫак ҫитменлӗх ҫук, гаражра пушар сигнализацине вырнаҫтарнӑ. Шкулта юсав ӗҫӗсем ирттернӗ, стенасене, мачҫана, пусма картлашкисене сӑрланӑ. Шкул директорӗ Анжела Григорьева маччаран ҫӑвӗпех шыв юхни пирки каларӗ. Ҫакӑ ҫурт тӑрри юсавсӑррипе ҫыхӑннӑ.

«Ягодка» ача садӗнче иккӗмӗш эрне юсав ӗҫӗсем пыраҫҫӗ. Сергей Сармосов терроризма хирӗҫ тренировкӑсем ирттермеллине аса илтерчӗ. Ҫак вӗренӳ учрежденийӗ тӗлӗшпе асӑрхаттарусем урӑх пулмарӗҫ. Темиҫе ҫул каялла уҫӑлнӑ «Крепыш» ача садӗнче те кӑлтӑксем ҫук. Ачасене хӑрушсӑрлӑхпа тивӗҫтерме сад тулашӗнче 5 камера вырнаҫтарнӑ, шалта тата тепре пур. Комисси ҫитнӗ вӑхӑтра ачасем кӑнтӑрлахи апат хыҫҫӑн ҫывӑрма выртнӑччӗ. Садикри пӳлӗмсене пӑхса ытармалла мар: йӗри-тавра таса, вылямалли пӳлӗмсем, музыка залӗ, бассейн та пур кунта.

«Пӳрнеске» сад «Крепышпа» танлаштарсан ачасене 30 ҫула яхӑн ытларах йышӑнать пулин те хитрелӗхӗпе пӗртте кая мар. Сад умӗнчи площадкӑра артобъектсем ӑсталаса вырнаҫтарнӑ. Ашшӗ-амӑшне валли ачисене кӗтмелли ятарлӑ вырӑн та хатӗрленӗ. Кунта саксем лартнӑ, хӗвел тӑрӑх вӑхӑт кӑтартакан ятарлӑ конструкци те пур. Садра 4 камера вырнаҫтарнӑ, шала домофонпа чӗнсе кӑна кӗме пулать. Садике хӑтлӑрах тӑвас тӗллевпе юсаҫҫӗ, пластик кантӑксем те лартнӑ, ҫурт тӑррине ҫӗнӗрен витнӗ. Сад площадкинче чӑхсем ҫӳренине асӑрхарӑмӑр, часах кайӑк-кӗшӗке пӗр хӗрарӑм хӑваласа тухса кайрӗ. Сад заведующийӗ Наталия Романова сӑмахӗсем тӑрӑх, иртнӗ ҫул кунта качакасем те кӗнӗ. Кайӑк-кӗшӗк хуҫине чӑхсене килте тытса усрамалли ҫинчен ӑнлантарни кӑлахах пулнӑ-мӗн. Садик ҫуртне пӑхса тӗрӗслесе тухнӑ хыҫҫӑн комисси членӗсем кӑлтӑксем тупмарӗҫ.

А. Тихонва сӑн ӳкерчӗкӗ

СӐМАХ МАЙ

Июль уйӑхӗнче 2017-2018 вӗренӳ ҫулне йышӑнма республикӑра комиссисен 955 вӗренӳ учрежденине тӗрӗслемелле. Республикӑри 9 шкулта хутса ӑшӑтмалли санитарипе техника пӳлӗмӗсене хута ямалла (ҫакна валли 9,7 млн тенкӗ уйӑрнӑ), ялти шкулсенче 21 спорт залӗ юсамалла (21,1 млн тенкӗ), республикӑри 8 шкулта тӗплӗ юсав тумалла.

Денис Геннадьевич пӗлтернӗ тӑрӑх, июлӗн 27-мӗшӗ тӗлне тӗрӗслеве тӑратнӑ 37 объектран 4-шне – 2 шкул тата 2 ача сачӗ – хальлӗхе йышӑнман. Сӑлтавӗ – пушар сигнализацийӗсене йӗркене кӗртсе ҫитерменни, юсав ӗҫӗсем вӗҫленменни. Асӑрхаттарусене пӗтерме августӑн 15-мӗшӗччен вӑхӑт панӑ.

АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА

Чи йӳнни Ишлей ял тӑрӑхӗнче пулӗ – 1412, 50 тенкӗ.

Росстат пӗтӗмлетӗвӗсемпе, федерацин Атӑлҫи округӗн субъекчӗсенчен Мордва тата Чӑваш Ен шыв чи сахал пӗтерекен регионсем: уйӑхра 2589 тата 2640 литр. Ҫав вӑхӑтрах «перекетсӗр» Самар облаҫӗнчех уйӑхра пӗр ҫынна вӑтамран 4257 литр шывпа тивӗҫтереҫҫӗ. Ҫак виҫене шутланӑ чухне тӑкакланӑ сивӗ шывпа пӗрлех вӗрине те кӗртнӗ. Росстат специалисчӗсем вара хальлӗхе Чӑваш Ен тӗп хулинче пурӑнакансем сивӗ шывшӑн чи сахал укҫа – 25 тенкӗ – тӳленине тупса палӑртнӑ. Чулхулара 28 тенкӗ. Шывпа вӑтам усӑ куракан пӗр ҫын пуҫне тивекен чи пысӑк хак – 52 тенкӗ – Оренбургра.

Ытти коммуналлӑ пулӑшу хакӗ пекех, июль уйӑхӗнчен сивӗ шыв тарифӗсем те ӳсрӗҫ. Атӑлҫи тӑрӑхӗнче ку кӑтарту 4-5% тан. Анчах вӑл пуриншӗн те пӗр пек мар: шыв тӗлӗшӗнчен йӳнӗ шутланнӑ Ижевска, акӑ, ӳсӗм 17% таранах кӗтет. Шупашкарпа Хусана кӑшт ытларах ӑннӑ: шыв кунта 2,3 тата 2,8% кӑна хакланать. Сивӗ шывшӑн чи пысӑк тарифсене Шупашкар районӗнче Кӳкеҫре ҫирӗплетнӗ: кубла метршӑн ҫак уйӑхран 17,28 тенкӗ тӳлеме тивӗ. Сӑмах май вӑл 2016 ҫулхи декабрь уйӑхӗнчен 2,8% ӳснӗ. Вӑрман-Ҫӗктер ял тӑрӑхӗнче те вӑл йӳнех мар – 16,63 тенкӗ, анчах та Ишлей ял тӑрӑхӗнче ҫавҫавах пӗчӗкрех – унта пурӑнакансен 15,78 тенкӗ тӳлеме тивет. Сивӗ шыв расхучӗсемпе пӗтӗмпех ансат тата ӑнланмалла пулсан вӗрин хакӗ пиркиех ҫакна калаймӑн. Юлашкин хакӗ сиввипе ӑна вӗрилентерме кирлӗ ӑшӑ энергинне хушнипе пулатьҫке. Регионта та, районти кашни ял тӑрӑхӗнче те вӗрипе тивӗҫтерекен поставщиксем темиҫе те. Хакӗсем те вӗсен тӗрлӗрен. Чи пысӑк хаксене Атайкасси ял тӑрӑхӗ валли июлӗн 1-мӗшӗнчен «Новое село» ООО ҫирӗплетнӗ. Гигаколоришӗн – 1601 тенкӗ. Ҫав вӑхӑтрах Вӑрман-Ҫӗктер ял тӑрӑхӗнчех вӑл ӑшӑ энергийӗшӗн 1328 тенкӗ илсе тӑрӗ. Ун хыҫҫӑнах хака кура Кӳкеҫри «Теплоком» ООО пырать: ресурспа тивӗҫтерекен организаци тарифӗ 1586 тенкӗпе тан.

Шыв юхтарса кӑларас тивӗҫе те районта харӑсах темиҫе компани пурнӑҫлать. Ҫӗньялти «Дружба» СПОК хыҫҫӑн (кубла метршӑн 10,54 тенкӗ) Кӳкеҫри «Теплоэнергосеть» ООО тарифӗ чылайранпах чи йӳнни шутланать. 2016 ҫул вӗҫленнӗ чухнехи 13,16 тенкӗрен ҫак уйӑхран 3% ӳссе вӑл кунта 13,56 тенке ҫитрӗ. Ҫав вӑхӑтрах Шӗнерпуҫ ял тӑрӑхӗнчи «Ремстройгрупп» ООО таса мар шыва юхтарса кӑларнӑшӑн 26,60 тенкӗ илме тытӑнасса палӑртмалла. Ахаль те хаклӑ пулӑшу тӑкакӗ – кубла метршӑн 25,61 тенкӗ пулнӑ – малашне 26,6 тенкӗпе тан пулӗ. Ишлейсене кӑна улшӑну ытлах пырса тивмӗ. Коммуналлӑ пулӑшӑвӑн ҫак тӗсӗшӗн «Ишлейское» ЖКХ МУП тарифӗ 0,9%-ран ытларах ӳсмест.

ЦИФРӐСЕН ЧӖЛХИПЕ

2017 ҫулӑн январь-июнь уйӑхӗсенче Шупашкар районӗнче пурӑнакан

1218 ҫынна

коммуналлӑ пулӑшу тӑкакӗсене саплаштарма пурӗ 2594,6 пин тенкӗлӗх субсидипе тивӗҫтернӗ.

Кама ансат?

Коммуналлӑ пулӑшу тӑкакӗсен тӳлевӗн ҫӗршыв правительстви Чӑваш Республикишӗн июлӗн 1-мӗшӗнчен 3,9% шайӗнче ҫирӗплетнӗ улшӑну индексне пӑхсан регионта пурӑнакансемшӗн коммуналлӑ пулӑшушӑн хаксем ҫак кӑтартуран ытларах ӳсмелле мар. Уйрӑм муниципалитетсемшӗн ҫирӗплетнӗ 6,2% шайӗнчи чикӗри индексран ирттерес йышӑнӑва вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсем Раҫҫей Правительстви ирӗк панипе ҫеҫ тума пултараҫҫӗ. ЧР Пуҫлӑхӗн Указӗпе 2017 ҫулта пысӑкрах индекса – 4,4% – республикӑри 276 муниципалитет валли ҫирӗплетнӗ, 5 муниципалитетшӑн – 6,2%. 15 муниципаллӑ йӗркеленӳшӗн вӑл федераци субъекчӗн индексӗнчен те ытларах.

Кӳкеҫ ял тӑрӑх депутачӗсен пухӑвӗн йышӑнӑвӗпе коммуналлӑ пулӑшӑвӑн пӗтӗм тӗсӗпе усӑ курнӑшӑн июлӗн 1-мӗшӗнчен ҫирӗплетнӗ тӳлев индексӗ 7% шайӗнче. Хаксене тӗпрен илсен сивӗ шыва ӑшӑтма усӑ куракан энерги нормативӗсене Раҫҫей законодательствипе килӗшӳллӗн улӑштарнине пула та ӳстерме тивнӗ – ҫакӑн пек ӑнлантарнӑ официаллӑ документра. Ку улшӑну Кӳкеҫ ял тӑрӑхӗнче пурӑнакансен 30,3%, е 3593 ҫынна пырса тивӗ. Вӑтамран вара кунта хаксем 3,9%-ран ӳсмӗҫ. Тутаркасси ял тӑрӑх депутачӗсен пухӑвӗ вара чи пысӑк индекса 12% шайӗнче ҫирӗплетнӗ, июлӗн 1-мӗшӗнчен вара тӳлев хакӗн улшӑнӑвӗ вӑтамран 4% иртмелле мар. Вӑрман-Ҫӗктер ял тӑрӑх депутачӗсем индекса 10% шайӗнче йышӑннӑ, Ишлей ял тӑрӑхӗн – 7,5%, Ҫӗньялӑн – 10%, апла пулин те унта та кунта та хаксен вӑтам ӳсӗмӗ пӗрремӗшӗшӗн 4,5%, ыттисемшӗн 4,9% шайӗнче тытӑнса тӑрӗ.

Тӑкаксем ӳсеҫҫӗ, анчах коммуналлӑ пулӑшушӑн тӳленӗ укҫатенкӗн пӗр пайне саплаштарма патшалӑх пулӑшӑвӗпе усӑ куракансем ҫӑмӑллӑха туйса илчӗҫ те ӗнтӗ. Вӑл ҫемьен пӗтӗм тупӑшӗн 22% тивсен халӑха социаллӑ хӳтлӗх паракан органсем урлӑ субсиди илме май пур.

ВАЛЕРИЯ БЕЛОВА

www.tavanen.ru Июль 28 - Август 3, 2017 Тăван Ен № 29 (10575-10576)

85 çул халăхпа пĕрле

85 çул каяллахи пекех, паян та хаçатăн кашни номерне, кашни страницине, кашни рубрикине редакци ĕçченĕсем çакăн пек пуçтарăнса, канашласа, сӳтсе явса пичете туслăн хатĕрленĕ. Çур ĕмĕр каяллахи сарăхнă сăн ӳкерчĕке хумханмасăр алла тытаймăн. Пĕр кун пек иртнĕ çак çулсем, 1963 çулта яваплă секретарьте ĕçленĕ Павел Васильев çеç (халĕ вăл 87 çулта, хаçатран кăшт кăна аслăрах) çур ĕмĕр каялла сĕтел хушшинче ларса хаçат страницисене пичет умĕн мĕнле вуланă – çавăн пекех юбилей умĕнхи номере хатĕрлеме хутшăнчĕ. Акă мĕн пĕрлештерчĕ çак сăн ӳкерчĕксене. Çак пултаруллă йăхташăмăрсен, ентешĕмĕрсен ĕçне малалла тăсма мехел çитернĕшĕн, вĕсен пуçарăвне манăçа кăларманнишăн тивĕçлипех мăнаçланатпăр эпир...

Павел ВАСИЛЬЕВ,
журналист-ветеран:

– Шкулта пĕлӳ пухнă чухнех сăвăсем çырас туртăм вăраннăччĕ. Салтака кайиччен те, кайран та хайлавсем калăплаттăм. Манăн пĕрремĕш сăвă «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пичетленсе тухнине паянхи пекех ас тăватăп. Кĕнеке кăларма сĕнсен турткаланса тăмарăм, килĕшрĕм. «Ялав» журнал çумĕнче пĕчĕк брошюра пек «Салтак чĕри» ятпа сăвăсен пуххи тухрĕ. Сăввăмсене асăрханăранах мана «Ленинец» хаçата ĕçлеме чĕнчĕç. Эпĕ ун чухне 28 çулта пулнă. Ун чухне тĕп редакторта граждан вăрçин инваличĕ Яков Никитин ĕçлетчĕ. Вăл, çапăçу хирĕнче хăрах аллине çухатнăскер, питĕ сăпайлă çынччĕ. Хаçат кăларма пĕччен йывăр пулнăран çын шыранă та. Çулталăка яхăн ĕçленĕ хыççăн, вăл отпуска кайсан, эпĕ пĕччененех тăрса юлтăм. Шăпах çав вăхăтра Ишлей тата Шупашкар районĕсене пĕрлештерчĕç. Яков Никитина, отпускра пулнăскере, вăхăт çитнĕ тесе пенсие ячĕç. Редактора Василий Петрова лартрĕç. Вăл çыпăçуллă калаçатчĕ, анчах статьясем çырмастчĕ. Пурăна-киле вăл та çырма вĕренсе çитрĕ.

Производство управленийĕсем пулса кайсан район хаçатне хупрĕç. 1963 çулта ăна çĕнĕрен туса хурса мана тепĕр хут редакцие чĕнсе илчĕç. Хаçат вырăсла-чăвашла тухма тытăнчĕ. Транквиллин Логинов тĕп редактор мана куçаруçă пулма сĕнчĕ. Пĕр çур уйăх ытларах вырăсла хаçат тухрĕ пулмалла. Ăна пĕтерсен эпĕ ĕçсĕр тăрса юлтăм, мана радиовещани редакторĕнче ĕçлеме шанчĕç. Вунă çул вăй хутăм унта. Эрнере 3 хутчен передачăсем кăлараттăмăр. 15 минут пыраканскерсенче район пурнăçне туллин çутатма тăрăшнă. Тăрăшса ĕçленĕшĕн магнитофон туянса панине лайăх ас тăватăп, пĕр пăтран сахал мар туртатчĕ пулĕ вăл! Район хаçатĕнче эпĕ пурĕ 32 çул яваплă секретарьте, куçаруçăра, радиоорганизаторта вăй хунă. Пенсие тухнăранпа район хаçатне çырăнса илменни пĕр çул та пулман. Статьясене юратса вулатăп. Пичет кăларăмĕ питĕ килĕшет, унта пур ыйтăва та çутатма тăрăшнине куратăп. Çавă паха.

1963

Ятарлă пӳлĕм çукки пирки редакци ун чухне райком çуртĕнчи виçĕ пӳлĕмре вырнаçнă. Сăн ӳкерчĕкре ĕç саманчĕ, сулахайран сылтăмалла: тăраканĕ – ответлă секретарь А. Павлов, районти радиовещани пайĕн редакторĕ П. Васильев, ял хуçалăх пайĕн заведующийĕ А. Алексеев, Фомин (ятне калаймастпăр), Л. Николаев куçаруçă, Ф. Иванов фотокор.

Алевтина ГРИГОРЬЕВА,
Кӳкеç типографинче ĕçленĕ печатник:

– Сокращенипе ĕçсĕр юлсан хăюлăх тупса типографийе ура ярса пусрăм. «Ĕçлеетĕп-и е çук-и?», – тесе те иккĕлентĕм малтанлăха – çапах та 21 çул печатникре тăрăшрăм. Хаçат кăларнă чухне темле самант та пулнă. Сăн ӳкерчĕксем тухса ӳкетчĕç, «марашкисем» тухса чуна илетчĕç, вара тепĕр хут çапмалла. Ирхи виçĕ сехетчен хаçат кăларни те сахал мар пулнă. Йывăрлăхсемсĕр пулман паллах. Барабана хут кĕрсе кайса валиксем çумне хут çыпăçса ларатчĕ те, çавна кăларас тĕсе пичет машинине чавса таранах кĕрсе каяттăмăрччĕ. Алă, халат сăрăпа вараланса пĕтетчĕ. Ирхи виççĕччен ĕçлесен те ĕçе ирхи сакăр сехет валли тухнă. Калăпласа пĕтерессе кĕтсе лараттăмăр. Хаçат полоси гранка çинче – вăл çăмăл мар, пĕр вунă кило та таять, ăна наборщиксем патĕнчен мĕкĕрленсе йăтса килсе станока вырнаçтармаллаччĕ. Хăвăртрах çапса пĕтерес тесе апат çиме те кайман. Уйрăмах хĕлле хаçат кăларма йывăртараххчĕ. Хут магнитланса ларнине пула, ăна вырăнтан та хускатма йывăрччĕ. Экспериментсем те тăваттăмăр магнитлă хутпа – стена çумне илсе пырсанах ун çумне çыпăçса ларатччĕ, клейсăрах эрнипех тăрать вара.

2017

Редакци коллективĕ, июлĕн 27-мĕшĕ. Сулахайран сылтăмалла: тăракансем – А. Иванов тĕп бухгалтер, рекламăпа ĕçлекен И. Петрова, Е. Дадюкова редактор, А. Тихонова корреспондент, А. Васильев водитель; ларакансем – П. Васильев журналист-ветеран, сайт редакторĕ Е. Губанова, тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ В. Вышинская, В. Шумилова редактор, М. Иванова дизайнер

Галина ЛЬВОВА,
корректорта ĕçленĕ:

— 1985 çулта февраль уйăхĕнче «Тăван Ен» хаçата корректора вырнаçрăм. Çак ĕçре 28 çул тăрăшнă вăхăтра аса илсе йăл кулмалли те сахал мар пулчĕ. Вăл вăхăтра компьютер пулман, статьясене алăпа наборланă, çавăнпа хаçат кая юлса тухатчĕ. Макет саланса кайса çĕнĕрен наборланипе çурçĕр иртсен кăна хаçата калăпласа пĕтерни те пулнă. Мĕнле хаçат вăл йăнăшсăр? Ĕçлемен çын кăна йăнăшмасть. Акă пĕрре «суйламалли кун» вырăнне, «суймалли кун» тесе наборланипе пичетлесе янăччĕ. Вара çапса кăларнă хаçата пăрахăçласа çĕнĕрен пичетлеме тиврĕ.

Редакцирен: Çав вăхăтрах Галина Мефодьевна Кӳкеç радиовĕнче дикторта ĕçленĕ. Ун сасси Кӳкеç поселокне нумай çул вăратнă.

Вера ЭВЕРККИ,
«Хыпар» издательство çурчĕн хыпарсен службин редакторĕ:

– «Тăван Ен» хаçатра эпĕ 1996 çулта ĕçлеме пуçланă. Ку пулăм темĕнле асамлăхăн туйăнатчĕ. Мана, редакци алăкĕн урати урлă хăюсăррăн ярса пуснă ял хĕрне, хаçатра вуншар çул ĕçлекен опытлăран та опытлă журналистсем – П. Павлов, Л. Белов – ăш пиллĕн йышăнни паян кун та асăмрах. Чи малтанах эпĕ общество пурнăçĕн пайне лекнĕ. Унта В. Петровпа ĕçлеме тӳр килчĕ. Вăл та мана кăмăлтан пулăшса пычĕ. Николай Миронов журналист ăсталăхĕнчен - темăна тарăннăн уçса пама пултарнинчен, яка чĕлхинчен – тĕлĕнеттĕм. Хаçатăн редакторĕ пулса вăл вăхăтра Ю. Степанов-Листопад ĕçлетчĕ. Пуçлăх пулсан та хăйне мăнна хуманни, килен-каянпа ăш пиллĕн калаçни асра.

Пĕрремĕш хут заданипе яни те манăçмасть. Ун чухне Кӳкеçре пысăках мар лавкка уçрĕç. Çавна çутатакан 7-8 йĕркеллĕ хыпар çырмаллаччĕ. Апла та шăрçаларăм, капла та çавăрттартăм – ниепле те пулса пĕтмест. Çур кун ытла асапланатăм пĕр хыпарпа.

Асра юлнă тепĕр самант – районти ялсенчен пĕрне каякан информаци ушкăнĕнчен тăрса юлни. Вăл вăхăтра Çĕрпӳ районĕнчи тăванăмсем патĕнче пурăнаттăм. Чарăнура çур сехет ытла тăтăм - автобус çук та çук (хальхи пек марччĕ çав вăл вăхăтра, транспорт сайра хутлатчĕ). Эпĕ Кӳкеçе çитсенех мана кирлĕ УАЗик ларатчĕ, чарăнуран çитнĕ çĕре вăл хускалнă. Ĕçе кĕме хăратăп. Тен, урăх ушкăнпа кайма май килмĕ-ши тесе район администрацине вĕçтертĕм. Палламан пĕр хĕрарăм патне пырса ыйтрăм. Ăш пиллĕн калаçакан çав çын каярах район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш заместителĕнче - экономика пайĕн пуçлăхĕнче тимленĕ Альбина Егорова пулнă иккен. Вăл хăйсемпе лартса кайса хама кирлĕ ушкăн патне кĕртсе хăварчĕ. Район хаçатĕнче ĕçленĕ самантсене аса илнĕ чух ырă çынсене кăна аса илес, вĕсем çинчен çеç каласа кăтартас килет. Хаçат юбилейĕпе саламласа пĕр-пĕрне юратса, ырă сунса пурăнма сунатăп.

Владимир САВИНКИН,
«Хамăн типографи» тулли мар яваплăхлă общество директорĕ:

– Шупашкар район хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ тапхăр сирĕн пурнăçра мĕнле йĕр хăварчĕ? – тесе ыйтрĕç «Тăван Енре» ĕçлекенсем.

Хуравлатăп. Питĕ пысăк йĕр! Кунта эпĕ журналистика ăсталăхне алла илтĕм. Туслă редакци коллективĕнче ĕçлесе пысăк опыт пухрăм. Май килнĕ самантпа усă курса пĕрле вăй хунă ĕçченсене пурне те пысăк тав сăмахĕ каласа килет. Уйрăмах Геннадий Егорова, Иван Михайлова, Павел Васильева, Леонид Белова, Гелий Семенова, Петр Павлова, Николай Миронова, Юрий Степанова тата ыттисене те. Шел, çак йышра пирĕнтен ĕмĕрлĕх уйрăлнисем те пур.

Г. Егоров редактор панă пĕрремĕш заданисенчен пĕри – «Прогресс» колхозри отчетпа суйлав пухăвне кайса репортаж çырасси пулчĕ. Шăпах çавăн чухне «Прогреса» малалла ертсе пыма Михаил Васильевич Игнатьева шаннăччĕ. Паллах, хаçатра ĕçленĕ чухнехи асра юлнă паллăрах самантсене пурне те çырса кăтартаймăн. Вĕсем, тĕпрен илсен, «Ленинецра», кайран «Тăван Енре» ĕмĕрлĕхех вырăн тупса юлчĕç. Халĕ çак ĕçе – район историне тивĕçлĕн çырса пырассине хаçат редакцийĕн паян коллективĕ пурнăçласа пырать. Манăн вара çăмăл мар ĕçре пурне те ăнăçу сунас килет.

Хаçат редакцийĕпе Кӳкеç типографийĕ яланах пĕр çемье пек, пĕр тĕллевпе ĕçлетчĕç, пысăк мероприятисене йышпа ирттеретчĕç. Типографипе çывăх пулнипе малашнехи пурнăçа полиграфипе çыхăнтартăм. Ӳкĕнместĕп. Уйрăмах кĕнекесем пичетлесе кăларсан, авторсем ĕçпе кăмăллă юлсан, чун хĕпĕртет. Юбилейпе сана, «Тăван Ен»!

Новости с пригородным акцентом

Причебоксарье

• В МАСШТАБАХ СТРАНЫ

Учащийся 10-го класса гимназии №1 города Мариинский Посад Иван Александров принял участие в «Недетском разговоре» с Президентом России Владимиром Путиным в образовательном центре «Сириус» в Сочи.

Он коротко рассказал Президенту о себе, достижениях школы. Затем более подробно остановился на том, что он участвует в играх «Зарница», «Орленок». По словам Ивана, его команда ежегодно на муниципальных этапах занимает призовые места, а в 2017 году она стала участником республиканских финальных игр «Зарница». «Владимир Владимирович, участвовали ли вы в военно-патриотических играх «Зарница» и «Орленок»? – спросил школьник из Чувашии. На что Владимир Путин ответил, что, к сожалению, не участвовал. Однако все время занимался спортом. Далее он ознакомил присутствующих со своими спортивными достижениями.

Иван – лауреат стипендии Главы Чувашской Республики за особую творческую устремленность.

Он направил свой проект «Использование микропроцессоров для повышения качества услуг, предоставляемых в сфере ЖКХ» на сайт центра «Сириус», а через месяц его пригласили в Сочи.

• ДЕЛА МЕСТНЫЕ

И на пенсии разводятся

В Чебоксарском районе за 6 месяцев 2017 года родились 282 ребенка, умерли 257 человек. Из общего количества рожденных детей 93 стали в своих семьях первыми, 128 – вторыми, 41 – третьими, 13 – четвертыми, 4 – пятыми, 2 – шестыми, 1 – седьмым.

Об этом сообщает отдел ЗАГС администрации района. За вышеуказанный период родились 139 мальчиков и 143 девочки. В тройке популярных мужских имен – Максим, Егор, Кирилл, женских – Анна, Виктория, Екатерина. К тому же с начала года зарегистрировано 6 двоен.

Марш Мендельсона прозвучал для 161 пары, семейные узы разорвали 89 пар. Интересно, что четверо мужчин и одна женщина развелись, будучи старше 60 лет.

Добавим, что по данным Росстата, за январь-май 2017 года в Приволжском федеральном округе Чувашия с коэффициентом 3,2 занимает второе место по наименьшему показателю разводов на 1000 населения. За 1 полугодие 2017 года в органах ЗАГС ЧР зарегистрировано 2672 акта о заключении брака, что на 3,3 % больше в сравнении с аналогичным периодом прошлого года.

• ФНС СООБЩАЕТ

Межрайонная инспекция ФНС № 5 по Чувашской Республике сообщает о проведении 4, 11, 18 и 25 августа 2017 года с 10.00 до 11.30 «открытых классов» по вопросу перехода на новый порядок применения контрольно-кассовой техники. Адрес: Чувашская Республика, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Советская, 32, в фойе Инспекции.

Пишущая братия – «под крылом» хрупкой женщины

• ТВОИ ЛЮДИ, РАЙОН!

1999 год, п. Кугеси. После семинара

На досуге – за любимым делом

Накануне юбилея нашего издания мы пытались отыскать родственников первого главного редактора Чебоксарской районной газеты «Колхозник çулĕ» Порфирия Ростова. Племянницей известного журналиста оказалась бывший заместитель министра печати и информационной политики Лидия Гаврилькова. Сестра матери Лидии Александровны Нина Ерлакова была его женой. К сожалению, к моменту рождения Лидии Порфирия Матвеевича уже не было в живых, поэтому рассказать о нем она ничего не смогла. Однако ее биография оказалась не менее интересной и увлекательной.

«Я люблю журналистов и всех тех, кто связан с этой профессией», – повторила несколько раз при встрече родственница Ростова. Приятно слышать такие слова от человека, который всю свою жизнь провел в журналистской среде, изначально не имея к этой сфере никакого отношения.

Все, кто знаком с этой невысокой миловидной женщиной, говорят о ней, как о второй маме для пишущей братии. «Она часто приезжала к нам в Кугесьскую типографию, проводила семинары с бухгалтерами, главными редакторами районных газет. От нее всегда веяло материнской заботой о своих подопечных, в глазах читалась искренняя заинтересованность в решении каких-либо проблем», – вспоминает дизайнер Марина Иванова, в то время трудившаяся в стенах типографии печатником.

Уроженка поселка Кугеси Лидия Александровна, окончившая экономический факультет Чувашского государственного университета им. И.Н. Ульянова по специальности «планирование промышленности», совершенно случайно узнала о вакансии инженера планово-производственного отдела, открытой в Государственном комитете по делам издательства ЧАССР. «Как сегодня помню, это было 25 августа 1982 года, мне было 36 лет, на тот момент на руках уже было трое детей. На собеседовании уверенно сказали, приходите завтра, мы берем вас на работу. Если чего-то не умеете – научим!», – с улыбкой вспоминает Лидия Александровна.

С этого дня жизнь Лидии Гаврильковой стала вплотную связана с работниками печати, полиграфии, книжного издательства и книжной торговли. Самым первым рабочим инструментом у новичка были деревянные счеты. Потом появился арифмометр (настольная механическая вычислительная машина для точного умножения и деления, а также для сложения и вычитания), для размножения машинописного или рукописного текста использовали ротатор. Как рассказывает Лидия Александровна, первый компьютер появился у них где-то в 1993-94 годах. «Мы приобрели их в количестве 5 штук. Один оставили себе, два отправили в газету «Советская Чувашия», остальные – в «Хыпар». Помню, как сидели за этим «чудом техники» и пытались хоть как-то им воспользоваться, учить-то нас было некому», – делится женщина.

После двух лет работы многодетная мать становится старшим экономистом, затем на-

1998 год, «Лыжня России»

чальником планового отдела, начальником отдела финансов и экономического прогнозирования — главным бухгалтером, заместителем председателя. Из года в год название ведомства переименовывалось. В 2002 году Лидию Александровну назначают заместителем министра печати и информационной политики Чувашской Республики.

«За 22 года я пережила немалое количество руководителей, – с улыбкой говорит Лидия Гаврилькова. – И считаю, что вместе с ними мы сделали многое для развития отрасли печати, полиграфии и книгоиздательства. Я работала с такими руководителями, как Андрей Петров, Борис Васильков, Петр Краснов, Феликс Шарков, Николай Григорьев, Валерий Андреев, Наталья Володина и Юрий Николаев». По ее словам, были и тяжелые времена, когда даже бумаги не было. Искали разные пути решения проблемы, даже пытались на обойной бумаге печатать, но это не спасло положение. Обои оказались слишком плотными для этого. А о «вексельном» времени женщина даже вспоминать не любит. «Зато в Госкомиздате Российской Федерации мне всегда одобряли все наши заявки, почему-то не могли мне отказать. Представители других регионов между разговором сетовали на то, что им постоянно финансирование урезают, а я молчала и слушала, нам-то до копейки одобрили», – рассказывает пенсионерка.

На хрупких плечах этой женщины лежали организация различных семинаров для работников районных изданий, участие в межрегиональных выставках, информационных днях, днях клиента, спортивных мероприятиях. Уже 14 лет как Лидия Александровна на заслуженном отдыхе, однако ежегодно посещает Дни печати, встречается с нынешними и бывшими работниками своего ведомства. На день рождения Лидии Гаврильковой ветераны традиционно собираются у нее дома за накрытым столом. Им всегда есть о чем поговорить, что вспомнить.

Стены квартиры, в которой проживает Лидия Александровна, увешаны картинами удивительной красоты. Видно, скучать ей не приходится: в любую свободную минутку она корпит над вышиванием очередного шедевра, а в летнее время и по выходным дням ее дом наполнен детскими голосами внуков и правнука.

Множество наград хранится в копилке ветерана труда, Заслуженного экономиста ЧР: Почетные грамоты родного ведомства, Госкоминформпечати Российской Федерации, благодарственные письма Президента Чувашской Республики, председателя Государственного Совета Чувашской Республики.

ЕЛЕНА ДАДЮКОВА

• К ЮБИЛЕЮ ГАЗЕТЫ

Библиотекари Чебоксарского района первыми поздравили газету «Тăван Ен» с юбилеем. В Центральной библиотеке в п. Кугеси они оформили выставку-досье «Тăван Ен. 85 лет вместе с народом», где можно ознакомиться с историей издания.

